никĕсне хываканĕ. «Сутра» комедири сăнарсен реализмĕ, сатирăпа кулăш. «Ялта» драмăри конфликтпа характер проблеми, реализмпа философилĕх тарăнлăхĕ. Ф. Павловăн «Сутра» комедийĕнчи кулăш йĕрĕсемпе мелĕсем. Ф. Павлов – фельетонист.

Октябрь революцийĕ Чăваш поэзине илсе килнĕ çĕнĕлĕхсем. «Сунтал» тата «Капкăн» журналсен литературăна аталантарас пĕлтерĕшĕ. «Чăвашкино» ĕçĕ-хĕлĕ. Хайлавсенчи тĕп темăсем: халăхăн иртнĕ кун-çулĕ, çĕнĕ влаçа çирĕплетессишĕн пынă кĕрешӳ, граждан вăрçи, çĕнĕ тĕнчепе çĕнĕ этем ӳсĕмĕ, халăхсен туслăхĕ. Уйрăм çыравçăсем (В. Рсай, Е. Еллиев, С. Ялавин) саманан çивĕч ыйтăвĕсене хăюллăн хускатни.

Партипе унăн политики кӳнĕ чăрмавсене пăхмасăр литература малалла аталанни. Тĕп темăсем: ялхуçалăхне ушкăнлани, çĕнĕ пурнăç никĕсне хывни, индустриализаци, çĕнĕ самана çынни ӳсни, халăх кун-çулĕ. Пĕрремĕш чăваш романĕсем.

Çыравçă чăваш сăмахлăхне çĕнĕ жанрсем кĕртни. Сăвăсенчи халăхлăх, гражданлăх, йыхравлăх. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна çырнин тата пичетлесе кăларнин историйĕ. Пĕрремĕш текстри историлĕхпе реализм туртăмĕ. «Вутпа тăвăл витĕр» романри автобиографилĕх. «Шурăмпуç килсен» - чăваш прозинчи нумай планлă пĕрремĕш роман. Трубина Мархви тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ. Пирвайхи сăввисенчи халăх сăмахлăхĕн композицийĕпе сăнарлăхĕ. Юмахсенчи çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем тата ăс парас шухăш. Калавсенчи сюжет çивĕчлĕхĕ. Калавсенчи ĕç ӳкерчĕкĕсем, психологилĕх. Çыравçăн повесть жанрне аталантарас ĕçри вырăнĕ («Мучар»). И.С. Максимов-Кошкинский тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ. Вырăс тата тĕнче драматурги классикине чăвашла куçарни. Çыравçă драмисенчи истори теми, халăх кун-çулĕ. Вĕсенчи политикăпа идеологи витĕмĕ. П. Н. Осипов тата чăваш театрĕ. «Айтар» драмăри конфликт чăнлăхĕ, композиции йĕркеленĕвĕ. Пьесăсенчи «киввипе çĕнни» тема, конфликтпа характер ыйтăвĕ, композиции палăрăмĕсем, фольклор пĕлтерĕшĕ. Иван Мучи тата «Капкăн»



журнал. Çыравçăн кулăшĕпе сатирин пĕлтерĕшĕ тата тĕллевĕсем. Хайлавсенчи ахаль çын сăнарĕ. Унăн шалти сăн-сăпатне тишкермелли мелсем. Çамрăк чухнехи калавĕсемпе очеркĕсен аван енĕсемпе кăлтăкĕсем. «Ылтăн ту» - индустриализаци темипе çырнă повесть. Рабочисен сăнарĕсем. Очерксенчи çарпа сыхлăх теми. Хайлавсенчи публицистикăлăхпа илемлĕх шайлашăвĕ. Иван Ивник - поэзире юрă жанрне аталантараканĕ, романс ăсти, çамрăклăх юрăçи. Унăн поэзийĕнчи икĕ тĕп туртăм: пурнăç-хĕпĕртӳ, пурнăç-кĕрешӳ. Поэтăн юрра куçнă сăввисем. М. Юманăн «Шевле вылять» несерти философилĕх, лирикăпа романтика туртăмĕ, лирика геройĕн сăнарĕ. «Нарспи» несерпе «Пӳлĕх йăмри» новеллăн палăруллă енĕсем. «Пурлăх комиссарĕ» - рабочисем çинчен çырнă пĕрремĕш повесть. В. Рзайăн «Çамрăк вăхăт» сăвă кĕнекинчи шухăшпа илем пĕрлĕхĕ. «Аслати умĕн» тата «Пăхăр чĕлĕм» поэмăсенчи вăрçă теми. Çыравçă прозăра хăй самани ирĕк паман кăткăс темăсене хускатни. «Пушар» повеçри çынлăхпа чунлăх ыйтăвĕ, гуманизм идейи. Е. Еллиев - соцреализм картне ларман сăнлăхпа, кăткăс психологилĕхпе усă курнă çыравçă. Малтанхи очерксенчи тĕрĕслĕхпе сăнарлăх. Пĕчĕк прозăри «пĕчĕк» çын шăпи, герой чунĕ пăтраннин йĕрĕ. С. Элкерĕн малтанхи тапхăрти публицистики. Калавсемпе очерксенчи туртăмсем. «Вăрçă кунĕсем» хайлавăн жанр уйрăмлăхĕ. Унта автобиографилĕх, пурнăç чăнлăхĕ, сăнарлăхпа илемлĕх, вырăс классикин витĕмĕ. М. Н. Данилов-Чалдун - пĕчĕк калав ăсти. «Лизавета Егоровна» - вăрçă эпикин кăтартуллă тĕслĕхĕ. Çут çанталăк ӳкерчĕкĕсемпе этем ĕçĕ-хĕлĕн шайлашулăхĕ. «Икĕ вăй» повеçри сюжетпа сăнарсен уйрăмлăхĕсем, конфликт пĕлтерĕшĕ. М. Чалдун - драматург. Н. Янкасăн яш-кĕрĕме халаллана сăввисен хăйевĕрлĕхĕ, сăнарлăхĕ. Лирика геройĕ пурнăç илемне хĕрӳ ĕç шавĕнче шырани. Калавсемпе очерксенчи каччăсемпе хĕрсен сăнарĕсем, илемлĕх туртăмĕ. И. Тăхтин «Колчак» поэминчи жанрпа сюжет тата композици уйрăмлăхĕсем. Çыравçăн «Шерхулла», «Иптеш» тата ытти калавĕсенчи ытарлă

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | кулăш. | |
| 5 | Чувашская литература 20 века (1940-1954) | 1941-1941 çулсенчи чăваш литератури аталанăвĕ. 1941-1945 çулсенчи поэзири тĕп туртăмсем. П. Хусанкай, Я. Ухсай, А. Алка, Уйăп Мишши поэзийĕн хăйне евĕрлĕхĕ. П. Хусанкайăн «Таня», «Аптраман тавраш» хайлавĕсен реализмĕ, героика пафосĕпе эпикăлăхĕ. И. Тукташăн прозăлла сăввисен илемлĕхĕпе сăнарлăхĕ. Лирикăлла герой сăн-сăпачĕ. 1941-1945 çулсенчи чăваш прозинче вăрçă чăнлăхĕ, документла ÿкерчĕк. Çивĕч публицизмпа оперативлăх, поэтика хăйне евĕрлĕхĕ. Илпек Микулайĕ, Л. Агаков, М. Чалтун çырнă вăрçă очеркĕсемпе калавĕсем. Вăрçă вăхăтĕнчи драматургин тĕп паллисем. Хайлавсенчи сюжетпа конфликт. Вăрçă хыççăнхи литература аталанăвĕ. Унти çĕнĕлĕхсемпе çитменлĕхсем. Вăрçă хыççăнхи поэзии аталанăвĕнчи эпика туртăмĕ. Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэмăпа П. Хусанкайăн «Тилли юррисем» ярăмăн жанр уйрăмлăхĕ, шухăш пуянлăхĕ. Вăрçă хыççăнхи прозăра вăрçă темине çутатакан хайлавсенчи героикăлла туртăм. Шухăшпа сăнарлăх шыравĕсем. Л. Агаковăн вăрçă калавĕсемпе повеçĕсенчи приключенипе романтика тата детектив сĕмĕ. Хв. Уярăн «Шурча таврашĕнче» романĕнчи сăнлавпа тишкерÿ аталанăвĕ. А. Артемьевăн «Салампи» повеçĕн сюжет çивĕчлĕхĕ, ĕçсен кăткăслăхĕпе драматизмĕ, сăнарлăхĕ. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» - социаллапсихологилле романĕн сюжет тытăмĕ, нацилле сăн-сăпачĕ. Вăрçă хыççăнхи драматургири ÿсĕмсемпе çитменлĕхсем. | Выступление на занятиях<br><br>Анализ текстов |
| 6 | Чувашская литература 20 века (1955-1970) | 1960–1970 çулсенчи литературăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕн çул-йĕрĕ. 1960-1970 çулсенчи проза аталанăвĕн уйрăмлăхĕсем. В. Алентей хайлавĕсенчи социалла пурнăç, кăмăл-сипет ыйтăвĕсем. М. Кипекĕн «Кайăк тусĕ» романĕнчи кулленхи паттăрлăх, тасалăх тата чыс ыйтăвĕсене татса пани. А. Емельяновăн «Хура кăрăç», «Шăнкăрав курăкĕ» хайлавĕсенчи сюжетпа сăнар тăвас ăсталăх. Сюжетри философилĕх. Ю. Скворцов повеçĕсемпе калавĕсен драмăлла пафосĕ, «пĕчĕк» çынсен пысăк чунĕсем, сăнлав мелĕсем. В. Игнатьев прозин психологизмĕ, сăнар тăвас ăсталăхĕ. 1960- | Выступление на занятиях<br><br>Анализ текстов |



| | | | |
|---|---|---|---|
| | | 1970 çулсенчи лирика нормăланă виçесенчен хăтăлса пыни. Лиро-эпикăлла тата лирикăлла поэмăсен жанр пуянлăхĕ. 1960-1970 çулсенчи драматурги çăмăл камитрен философилле драмăсем патне куçни. Драмăн çĕнĕ формисем, сюжет конфликтлăхĕ. Н. Терентьевăн «Пушар лаши» драмокомедийĕн жанр уйрăмлăхĕсем, пьесăри символсем. Асăннă тапхăрти литература тĕпчевĕпе критики аталанăвĕ. XX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенчи литература аталанăвĕн çул-йĕрĕ. Л. Таллеровăн «Эрхип мăнукĕ Эрхип», «Шавласа çулçă тăкăнать» хайлавсен психологилĕхĕ. Д. Гордеевăн «Шăрçа пуçлă çăпата», «Анаталла - тăвалла» повеçĕсен паха енĕсем, ыйтусен çивĕчлĕхĕ, сюжетпа конфликт хиврелĕхĕ. В. Ахунăн чăваш халăхĕн аваллăхне сăнарлакан хайлавĕсен жанр пуянлăхĕ. Ю. Сементер поэзийĕн нумай енлĕхĕ. Чăвашлăх, салтак темипе çырнисем. Поэзийĕнчи лирикăлла-философилле туртăм. | |
| 7 | Чувашская литература 20 века (1980-1990) | XX ĕмĕр вĕçĕнчи пурнăçри политикăпа экономика улшăнăвĕсем литературăна витĕм кÿни. Литература тĕпчевĕпе критики. Уççăнлăх тапхăрĕ чăваш прозине илсе килнĕ çĕнĕлĕхсем. Публицистика аталанăвĕ. XX ĕмĕр вĕçĕнчи «утмăлмăшсен» пултарулăхĕ. XX ĕмĕр вĕçĕнчи калавсемпе тĕрленчĕксем. Чăваш калавĕ прозăна кÿнĕ çĕнĕлĕхсем. XX ĕмĕр вĕçĕнчи приключениипе фантастика тата детектив сăмахлăхĕн утăмĕсем. XX ĕмĕр вĕçĕнчи (1986-1990 çулсем) повеçĕсем. Вĕсенчи философилле-психологилле шухăшлав. Чăваш романĕн пуянлăхĕпе пахалăхĕ. Вĕсен ытти литературăсен ретĕнчи вырăнĕ. XX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш поэзийĕн аталанăвĕ. Г. Айхи, В. Энтип, Н. Теветкел поэзийĕнчи историлле-философилле шухăшлав. Чăваш лирикинчи историлле – философилле шухăшлав туртăмĕсем. Халăх сăмахлăхне мала кăларакан поэзи аталанăвĕ. П. Эйзин, Ю. Сементер, Г. Юмарт поэзийĕнчи халăх сăмахлăхĕн паллисем, вĕсенчи чăвашлăх теми. Чăваш поэзийĕнче хĕрарăм-сăвăçсен сасси анлăн сарăлса пыни. Çÿл тÿпери çич çăлтăр (хĕрарăм-сăвăçсен поэзийĕ). Чăваш поэзийĕнчи вăхăтпа çын пĕрлĕхĕ (Г. Айхи, В. Энтип, | Выступление на занятиях<br><br>Анализ текстов |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | Ю. Айдаш, П. Эйзин, П. Афанасьев, М. Сениэль, Н. Исмуков, П. Яккусен). Чăваш сонечĕн аталану çул-йĕрĕ. Н. Теветкел сонечĕсемпе сонет кăшăлĕсем. У. Шекспир сонечĕсен чăвашла куçарăвĕсем. XX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш драматургийĕн аталанăвĕ. Чăвашла пьесăсен «мыскаралăхĕ». Камитсен пахалăхĕ. Пьесăсенчи кулăш мелĕсем. Н. Сидоровăн «Хўхĕм хĕрĕн хўхлевĕ» трагедийĕпе «Çăлтăр сўннĕ каç» драмин пахалăхĕ. Вĕсенчи халăх историйĕ. А. Чебанов пьесисенче социалла пурнăçпа çамрăксен кăмăл-сипет ыйтăвĕсене çивĕч хускатни | |
| 8 | Современная чувашская литература (2000-2015) | XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш сăмахлăхĕ аталанăвĕн çивĕч ыйтăвĕсем. Поэзи. Проза. Драматурги. Чăваш прози аталанăвĕн хăй евĕрлĕхĕ. Чаваш прозинчи мифла модернизм паллисем. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш прозинчи кăмăл-сипет, сапăрлăх ыйтăвĕсен çивĕчлĕхĕ. Çĕнĕ ĕмĕрти чăваш литературинчи детективла-приключенилле проза. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш прозинчи вăхăт инçетлĕхĕн паллисем. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш поэзийĕн çĕнĕлле аталанăвĕ: ушкăнĕсем, авторĕсем, лирика геройĕн вырăнĕ. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш драматургийĕн çĕнĕлĕхĕ. Драматургири жанр пуянлăхĕ: драма, мелодрама, монодрама. XX-XXI ĕмĕрсен чиккинчи чăваш литературин тĕпчевçисем тата вĕсен паллăрах ĕçĕсем (Г. Хлебников, В. Родионов, Г. Федоров, Ю. Артемьев, А. Мефодьев, П. Метин). | Выступление на занятиях<br><br>Анализ текстов |

**2.2 Распределение видов учебной работы по разделам дисциплины (модуля)**

| № раздела | Наименование разделов (тем) | Количество часов | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Всего | Аудиторная работа | | | СР |
| | | | Л | ПЗ | ДОТ | |
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 1 | История зарождения чувашской письменности (с древности до 18 века) | **9** | 2 | | 2 | 5 |
| 2 | Чувашская письменность 18-19 веков | **9** | 2 | | 2 | 5 |
| 3 | Чувашская литература 20 века (1900-1919) | **9** | 2 | | 2 | 5 |
| 4 | Чувашская литература 20 века (1920-1930) | **9** | 2 | | 2 | 5 |
| 5 | Чувашская литература 20 века (1940-1954) | **11** | 2 | 2 | 2 | 5 |
| 6 | Чувашская литература 20 века (1955-1970) | **9** | | 2 | 2 | 5 |
| 7 | Чувашская литература 20 века (1980-1990) | **11** | | 2 | 4 | 5 |
| 8 | Современная чувашская литература (2000-2017) | **13** | | 4 | 4 | 5 |
| | Итого | **80** | 10 | 10 | 20 | 40 |



**3. Список рекомендуемых источников**

**3.1 Основная и дополнительная литература**


а) основная литература:

1. Мефодьев, А. И. и др. Чувашская литература (2000–2014 годы) : жанровая специфика и национальное своеобразие / А. И. Мефодьев, Н. Н. Осипов, О. В. Скворцова, Н. И. Степанова. – Чебоксары : Чуваш. гос. пед. ун-т, 2015. – 219 с.
2. Степанова, Н. И. Хальхи чăваш литератури (XX ĕмĕр вĕçĕпе XXI ĕмĕр пуçламăшĕ) : вĕренӳ пособийĕ / Н. И. Степанова. – Шупашкар : Чăв. патш. пед. ун-чĕ, 2013. – 187 с.

б) дополнительная литература:

1. Абрамов, В. А. Становление и развитие чувашской повести : учеб. пособие / В. А. Абрамов. – Чебоксары : ЧГУ, 2004. – 131 с.
2. Метин, П. Н. Юрий Терентьев – кулашла повесть ăсти : (Терентьев Ю. П. пурнăçĕпе пултарулăхĕ) : вĕренӳ пособийĕ / П. Н. Метин. – Шупашкар : Чав. патш. пед. ун-чĕ, 2011. – 42 с.
3. Софронова, И. В. Традиции восточной поэзии в чувашской лирике : учеб. пособие / И. В. Софронова. – Чебоксары : Изд-во Чуваш. ун-та, 2006. – 143 с.
4. Степанова, Н. И. Н. Петровский-Теветкел – сонет ăсти : вăренӳ пособийĕ / Н. И. Степанова, Л. Г. Руссакова. – Шупашкар : Чăв. патш. пед. ун-чĕ, 2010. – 58 с


**3.2 Периодические издания**

Журнал «Тăван Атăл» (Родная Волга) издается с 1931 года.

**3.3 Ресурсы сети Интернет**

http: // www.ponal.edu.ru – Федеральный портал «Российское образование»

http: // www.obrazov.cap.ru - сайт Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики

http: // www.chuvash.org – Чувашский народный сайт

http: // www.lib.cap.ru – ГУК «Национальная библиотека Чувашской Республики» г. Чебоксары

http: // www.chgpu.edu.ru –ФГБОУ ВО «ЧГПУ им. И.Я. Яковлева»

*http://biblio.chgpu.edu.ru/postuplenia/postIPR-03-2017.htm*

*http://biblio.chgpu.edu.ru/knigoobespech.php*

Базовый набор программ: ОС Windows 7. Профессиональная 64bit; Office Standard 2010 Russian KasperskyEndpointSecurity для бизнеса, браузер Яндекс, Google Chrome, Opera, Mozilla Firefox

**4 Фонд оценочных средств**

**РАЗДЕЛ 1. ЧУВАШСКАЯ СЛОВЕСНОСТЬ 18-19 ВЕКОВ**

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов:**

1. *Н.Я. Бичуринăн ода çырас ăсталăхĕ.*
2. *«Паян эпир айла...» мухтав сăвви (1795).*
3. *«Тĕлĕк» ода (1795), унти сăнарсем, лирика геройĕ, поэтика мелĕсем, автор ăнĕ.*

4. *«Байкал» - ҫул ҫӳрев очеркӗ, унӑн хӑй евӗрлӗхӗ.*
5. *И. Иванов пултарулӑхӗ.*
6. *И. Иванов чӑваш калавне никӗслекенӗсенчен пӗри.*
7. *И. Иванов калавӗсенчи натурализм паллисем, тытӑмӗнчи экспозици пӗлтерӗшӗ.*

**РАЗДЕЛ 2. ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА 20 ВЕКА (1900-1919)**

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов:**

1. *И. Юркинӑн литературӑри ӗҫӗ-хӗлӗ. Унӑн очеркӗсемпе калавӗсем, вӗсен идейисемпе поэтики.*
2. *«Этем пырӗ тутӑ та куҫӗ выҫӑ», «Мул» повеҫӗсем.*
3. *Повеҫсенчи конфликт, сюжет аталанӑвӗ, пурнӑҫа сӑнлас мелсем.*
4. *Яккупа Хветӗр Турхансен чӑваш поэзине аталантарас ӗҫри витӗмӗ.*
5. *Якку Турхан поэзийӗнчи ҫут ҫанталӑк пӗлтерӗшӗ.*
6. *Хветӗр Турханӑн поэма ҫырас ӑсталӑхӗ.*
7. *К.В. Иванов - чӑваш поэзийӗн классикӗ. Вырӑс тата ют ҫӗршыв классикӗсем кӳнӗ витӗм.*
8. *«Хальхи самана» поэмипе «Выҫӑ аптранӑскерсем» тата «Усал шӑрӑх» сӑвӑсен публицизмӗ.*
9. *«Икӗ хӗр» юмахпа «Тимӗр тылӑ» тата «Тӑлӑх арӑм» балладӑсенчи пурнӑҫ чӑнлӑхӗ, конфликт ҫивӗчлӗхӗ, сӑнарсен витӗмлӗхӗ.*
10. *«Нарспи» поэмӑри чӑваш тӗнчи.*
11. *«Шуйттан чури» трагедие ҫырнин тата пичетлесе кӑларнин историйӗ. Хайлаври романтизм, синкерлӗ конфликт, философилле шухӑш, сӑнарсен характеристики.*

**РАЗДЕЛ 3. ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА 20 ВЕКА (1920-1930)**

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов:**

1. *Ҫеҫпӗл Мишши хайлавӗсенчи идеологипе чӑваш идейин тупӑшӑвӗ, пурнӑҫ тупсӑмӗн тавлашӑвӗ.*
2. *Ҫеҫпӗл туса урттернӗ сӑвӑ реформи.*
3. *Поэзийӗн тӗп туртӑмӗсем, вӗсен философилӗхӗпе трагизмӗ.*
4. *Ф. Павлов - совет тапхӑрӗнчи чӑваш драматургийӗн никӗсне хываканӗ.*
5. *«Сутра» комедири сӑнарсен реализмӗ, сатирӑпа кулӑш.*
6. *«Ялта» драмӑри конфликтпа характер проблеми, реализмпа философилӗх тарӑнлӑхӗ.*
7. *В. Рзайӑн «Ҫамрӑк вӑхӑт» сӑвӑ кӗнекинчи шухӑшпа илем пӗрлӗхӗ.*
8. *«Аслати умӗн» тата «Пӑхӑр чӗлӗм» поэмӑсенчи вӑрҫӑ теми.*
9. *«Пушар» повеҫри ҫынлӑхпа чунлӑх ыйтӑвӗ, гуманизм идейи.*
10. *Иван Мучи тата «Капкӑн» журнал.*
11. *Ҫыравҫӑн кулӑшӗпе сатирин пӗлтерӗшӗ тата тӗллевӗсем.*
12. *Калавӗсенчи самана палли, геройсен шӑпи.*
13. *Н. Янкасӑн яш-кӗрӗме халалланӑ сӑввисен хӑйевӗрлӗхӗ, сӑнарлӑхӗ.*
14. *Лирика геройӗ пурнӑҫ илемне хӗрӳ ӗҫ шавӗнче шырани.*
15. *Иван Ивник - поэзире юрӑ жанрне аталантараканӗ, романс ӑсти, ҫамрӑклӑх юрӑҫи.*
16. *М. Ястран поэзийӗн тӗп туртӑмӗсем.*

**РАЗДЕЛ 4. ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА 20 ВЕКА (1940-1954)**

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов:**

1. *М. Н. Данилов-Чалдун - пӗчӗк калав ӑсти.*
2. *«Лизавета Егоровна» - вӑрҫӑ эпикин кӑтартуллӑ тӗслӗхӗ.*
3. *Ҫут ҫанталӑк ӳкерчӗкӗсемпе этем ӗҫӗ-хӗлӗн шайлашулӑхӗ.*
4. *«Икӗ вӑй» повеҫри сюжетпа сӑнарсен уйрӑмлӑхӗсем, конфликт пӗлтерӗшӗ.*
5. *П. Хусанкайӑн «Таня», «Аптраман тавраш» хайлавӗсен реализмӗ, героика пафосӗпе эпикӑлӑхӗ.*
6. *П. Хусанкайӑн «Тилли юррисем» ярӑмӑн жанр уйрӑмлӑхӗ, шухӑш пуянлӑхӗ.*
7. *М. Ваҫлейӗн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ*
8. *Малтанхи поэзийӗн тӗп туртӑмӗсем*
9. *Митта поэзийӗнчи «лагерь» теми*
10. Л. Агаковӑн вӑрҫӑ калавӗсемпе повеҫӗсенчи приключенипе романтика тата детектив сӗмӗ.
11. «Ылтӑн вӑчӑра» повеҫри ҫынлӑхпа паттӑрлӑх теми.
12. Хв. Уярӑн «Шурча тавращӗнче» романӗнчи сӑнлавпа тишкерӳ аталанӑвӗ.
13. Романри сӑнарсен системи, вӗсене калӑпламалли мелсем.
14. «Шурча тавращӗнче» - чӑваш халӑхӗн историне сӑнласа паракан роман.
15. Илпек Микулайӗн «Хура ҫӑкӑр» - социалла- психологилле романӗн сюжет тытӑмӗ, нацилле сӑн-сӑпачӗ.
16. Романри сӑнарсене калӑпламалли мелсем.
17. Шерккей – 19 ӗмӗрти чӑвашӑн типлӑ сӑнарӗ.
18. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи поэзии аталанӑвӗнчи эпика туртӑмӗ.
19. Я. Ухсайӑн «Кӗлпук мучи» поэмӑпа П. Хусанкайӑн «Тилли юррисем» ярӑмӑн жанр уйрӑмлӑхӗ, шухӑш пуянлӑхӗ.
20. В. Алентей хайлавӗсенчи социалла пурнӑҫ, кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсем.
21. «Хирте вӗршӗнсем вӗсӗҫҫӗ» повеҫӗнчи ҫӗр тата чун экологийӗ.
22. «Курӑксене тайса ҫил вӗрет» повеҫӗнчи кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗн ҫивӗчлӗхӗ.
23. А. Артемьевӑн «Салампи» повеҫӗн сюжет ҫивӗчлӗхӗ, ӗҫсен кӑткӑслӑхӗпе драматизмӗ, сӑнарлӑхӗ.
24. «Ҫӑлтӑр ҫумӑрӗ» повеҫӗнчи вӑрҫӑпа тыл пурнӑҫӗн пӗрлӗхӗ.
25. А. Артемьевӑн сӑнарсене калӑплас ӗҫри психологизм витӗмӗ.
26. А. Артемьевӑн «Алтӑр ҫӑлтӑр», «Симӗс ылтӑн» повеҫӗсенчи пурнӑҫ ыйтӑвӗсем. Вӗсенчи лирикӑпа психологи паллисем.
27. 1960-1970 ҫулсенчи лирика нормӑланӑ виҫесенчен хӑтӑлса пыни.
28. Лиро-эпикӑлла тата лирикӑлла поэмӑсен жанр пуянлӑхӗ.

**РАЗДЕЛ 5. ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА 20 ВЕКА (1955-1970)**

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов:**

1. Ю. Сквоцов повеҫӗсемпе калавӗсен драмӑлла пафосӗ, «пӗчӗк» ҫынсен пысӑк чунӗсем, сӑнлав мелӗсем.
2. Ю. Скворцовӑн «Сурӑм хӗрӗ» повеҫӗн поэтикинчи пейзажпа портрет вырӑнӗ.
3. Ю. Скворцов калавӗсенчи драмӑлла пафос, сӑнлав мелӗсем, психологилӗх («Славию», «Пушмак йӗрӗ», «Юрӑҫ Ваҫҫа»).
4. М. Кипекӗн «Кайӑк тусӗ» романӗнчи кулленхи паттӑрлӑх, тасалӑх тата чыс ыйтӑвӗсене татса пани.
5. Романри тӗп тата пулӑшу пӗлтерӗшлӗ сӑнарсем, вӗсен пӗлтерӗшӗ.
6. Лиро-эпикӑлла тата лирикӑлла поэмӑсен жанр пуянлӑхӗ.
7. Поэзийӗнчи лирикӑлла-философилле туртӑм.
8. Н. Терентьев пьесисен хӑй евӗрлӗхӗ, жанр уйрӑмлӑхӗ.
9. Н. Терентьевӑн «Пушар лаши» драмокомедийӗн жанр уйрӑмлӑхӗсем, пьесӑри символсем.
10. А. Емельяновӑн «Шӑнкӑрав курӑкӗ» повеҫри тӗп сӑнарсем. Сюжетри философилӗх.
11. А. Емельяновӑн «Хура кӑрӑҫ» повеҫӗнчи характерсен типлӑхӗ. Сюжетпа сӑнар пултарӑвӗ.

**РАЗДЕЛ 6. ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА 20 ВЕКА (1980-1990)**

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов:**

1. Д. Гордеев повеҫĕсен поэтики. «Ҫич ҫунатлă кураю» повеҫĕнчи ҫитĕнекен ăрăва воспитани парас ыйтусене хускатни.

2. «Каҫма» повеҫĕнчи сăнарсен хăй евĕрлĕхĕ, сюжетпа конфликт ҫивĕчлĕхĕ.

3. Д. Гордеевăн «Пăсташ» романĕн поэтики. Хайлаври ĕлĕкхипе хальхи пурнăҫ ытăвĕсем.

4. Ю. Силэмĕн «Ҫылăхлă хĕрарăм» хайлавĕн жанр уйрăмлăхĕ.

5. Хайлаври сăнарсене калăплас мелсем, сюжетпа композици тытăмĕ.

6. В. Петров калавĕсемпе повеҫĕсенчи самана ыйтăвĕсен ҫивĕчлĕхĕ.

7. В. Петровăн «Венчет» калавĕпе «Венчет ҫĕрри» повеҫĕнче хускатнă тĕп ыйтусем. Вĕсенчи сăнар тăвас мелсем.

8. Н. Петровский-Теветкелĕн сонет ҫырас ăсталăхĕ. Сонечĕсемпе сонет кăшăлĕсен тематикипе стиль уйрăмлăхĕсем. Лирикăлла герой сăнарĕ.

9. Г. Айхи поэзийĕн хăйне евĕрлĕхĕ. Сăнарлăх, кĕвĕлĕх, шырав.

10. В. Энтип поэзийĕнчи философилĕх.

11. О. Туркайăн прозăлла сăввисен поэтики.

12. А. Юрату поэзийĕн хăй евĕрлĕхĕ.

13. Н. Силиверстова поэзийĕн сăнралăхĕ.

14. Н. Сидоров пьесисен конфликт ҫивĕчлĕхĕ.

15. Н. Сидоровăн «Ют йăвари куккук», «Кĕтрĕм сана, кĕтрĕм» драмисен тематики, конфликчĕ, сăнарĕсем.

## РАЗДЕЛ 7. СОВРЕМЕННАЯ ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА (2000-2015)

**Примерный перечень рассматриваемых вопросов**

1. Н. Петровскаян «Шурă лили» повеҫĕнчи сентиментализм паллисем.

2. Н. Петровскаян «Тăм тивнĕ чун», «Масар чартакĕ» хайлавĕсенче сăнарпа сюжет тăвас ăсталăх. Тĕп геройсен характеристики.

3. Н. Петровскаян «Ҫухатнă чыс» повеҫĕн сюжетпа стиль уйрăмлăхĕсем.

4. Н. Петровскаян «Шурă лили» тата «Ахрăм» повеҫĕсенчи сентиментализм туртăмĕ, тĕп проблемисем, сăнарсен типлăхĕ.

5. Н. Петровскаян «Хура ангел» романĕн хăйне евĕрлĕхĕ. Унти «мифла модернизм» паллисем, сăнар тăвас ăсталăх.

6. Улькка Эльменĕн «Кая юлнă ўкĕнў» повеҫĕнчи сăнлăхпа сăнарлăх мелĕсем. Геройсен характеристики.

7. «Упраймарăм сана…» романĕнчи кăмăл-сипет, психологизм паллисем, тĕп геройăн сăнарлăхĕ

8. «Качча кайсан» романĕнчи самана палли.

9. «Пепке ҫуралсан» повеҫĕнчи сăнар тăвас ăсталăх.

10. «Уйăх ҫинчи пике курнă…» повеҫĕнчи кăмăл-сипет ыйтăвĕн ҫивĕчлĕхĕ.

11. П. Эйзин, Ю. Сементер, Г. Юмарт поэзийĕнчи халăх сăмахлăхĕн пĕлтерĕшĕ.

12. Ю. Сементер пултарулăхĕнчи лирикăлла-философилле туртăм палăрни («Шĕнкрен», «Куҫҫуль», «Кăкшăм чăрăшĕн шухăшĕ»).

13. Г. Ефимов пултарулăхĕнчи лирикăлла туртăм, вăхăт туйăмĕ, психологилле тĕрĕслĕх.

14. Н. Ишентей сăввисен поэтики.

15. Н. Ишентейĕн «Ҫуралман ача сасси» поэминчи философи пĕлтерĕшĕ.

16. Б. Чиндыковăн «Хура чĕкеҫ», «Алăксем умĕнче» пьесисен сюжетпа композици уйрăмлăхĕсем.

17. Б. Чиндыковăн «Ҫатан карта ҫинчи хура хăмла ҫырли» трагедийĕн философилĕхĕ, унти кăмăл-сипет ыйтăвĕсем. Символсен пĕлтерĕшĕ.

**Фонды тестовых заданий**

А1. **Чăваш литератури историйĕпе теори хăнăхăвĕсем**

1. XIX ĕмĕрте литературăра йĕр хăварнă ҫыравҫă:



*1) Ф. Павлов*
*2) Н. Терентьев*
*3) Е. Рожанский*
*4) И. Юркин*

2. XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш ҫурринче литературăра йĕр хăварнă ҫыравҫă:

*1) С. Михайлов-Янтуш*
*2) И. Яковлев*
*3) С. Ялавин*
*4) А. Емельянов*

3. XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш ҫурринче литературăра йĕр хăварнă ҫыравҫă:

*1) Ю. Скворцов*
*2) В. Митта*
*3) Ф. Павлов*
*4) Ҫ. Элкер*

4. Кивĕ ҫырулăх вăхăтĕнче палăрнă ҫыравҫă:

*1) Н. Бичурин*
*2) Х. Турхан*
*3) К. Иванов*
*4) Ҫеҫпĕл Мишши*

5. XIX ĕмĕр вĕҫĕнчи поэт:

*1) Уйăп Мишши*
*2) Я. Турхан*
*3) Н. Янкас*
*4) П. Хусанкай*

6. XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш ҫурринчи драматург:

*1) Н. Терентьев*
*2) Г. Комиссаров*
*3) П. Осипов*
*4) М. Акимов*

7. XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш ҫурринчи прозаик:

*1) Б. Чиндыков*
*2) Ю. Айташ*
*3) П. Эйзин*
*4) Д. Гордеев*

8. «Сехет шаккать, шаккать кун-ҫул сехечĕ…» сăввăн авторĕ:

*1) А. Алка*
*2) Энтип Ваҫҫи*
*3) П. Яккусем*
*4) Н. Теветкел*

9. «Хĕр чухнехи пурнăҫа хăналăха теҫҫĕ» сăмахсем мĕнле хайлавăн эпиграфĕ?

*1) «Хура ҫăкăр»*
*2) «Салампи»*
*3) «Таната»*
*4) «Уках хурăнĕ»*

10. П. Осиповăн вариантлă хайлавĕ:

*1) «Пирĕн пурнăҫ хăтлăхра - Айтар»*
*2) «Элкей Павăлĕ – Пиччĕшĕпе шăллĕ»*
*3) «Кушар – Кăкламан тымарсем»*
*4) «Кулленхи симфони – Хаярлăхпа юрату»*

11. Калав вăл –

*1) ҫын пурнăҫĕнчи пĕр-икĕ ĕҫ е пулăм ҫинчен калакан пысăках мар прозăллă хайлав*

2) *пĕр çын сăнарĕпе çыхăннă ĕç-хĕле сăнлани*
3) *çын пурнăçĕнчи пысăк тапхăра кăна мар, ăрусен çыхăнăвне те сăнлани*
4) *чун-чĕре хумханăвне, шухăш-туйăма сăвăласа пĕлтерекен хайлав*

12. Повесть вăл –
1) *çын пурнăçĕнчи пысăк тапхăра кăна мар, ăрусен çыхăнăвне те сăнлани*
2) *пĕр çын сăнарĕпе çыхăннă ĕç-хĕле сăнлани*
3) *чун-чĕре хумханăвне, шухăш-туйăма сăвăласа пĕлтерекен хайлав*
4) *çын пурнăçĕнчи пĕр-икĕ ĕç е пулăм çинчен калакан пысăках мар прозăллă хайлав*

13. Роман вăл –
1) *пĕр çын сăнарĕпе çыхăннă ĕç-хĕле сăнлани*
2) *чун-чĕре хумханăвне, шухăш-туйăма сăвăласа пĕлтерекен хайлав*
3) *ĕç-пуç драмăлла конфликт мелĕпе йĕркеленет*
4) *çын пурнăçĕнчи пысăк тапхăра кăна 23аар, ăрусен çыхăнăвне те сăнлани*

14. Лирика вăл –
1) *чун-чĕре хумханăвне, шухăш-туйăма сăвăласа пĕлтерекен хайлав*
2) *пĕр çын сăнарĕпе çыхăннă ĕç-хĕле сăнлани*
3) *ĕç-пуç драмăлла конфликт мелĕпе йĕркеленет*
4) *çын пурнăçĕнчи пысăк тапхăра кăна 23аар, ăрусен çыхăнăвне те сăнлани*

15. Драма вăл –
1) *çын пурнăçĕнчи пысăк тапхăра кăна 23аар, ăрусен çыхăнăвне те сăнлани*
2) *ĕç-пуç драмăлла конфликт мелĕпе йĕркеленет*
3) *пĕр çын сăнарĕпе çыхăннă ĕç-хĕле сăнлани*
4) *чун-чĕре хумханăвне, шухăш-туйăма сăвăласа пĕлтерекен хайлав*

16. Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучи» хайлавĕ вăл –
1) *сăвăлла роман*
2) *калав*
3) *баллада*
4) *поэма*

17. А. Емельяновăн «Хура кăрăç» хайлавĕ вăл –
1) *эпикăлла роман*
2) *прозăлла сăвă*
3) *повесть*
4) *новелла*

18. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» хайлавĕ вăл –
1) *социалла-публицистикăлла роман*
2) *философилле роман*
3) *социалла-йăла романĕ*
4) *эпикăлла роман*

19. Хăшĕ Ю. Скворцов повеçĕ мар?
1) *«Шăннă куççуль»*
2) *«Уках хурăнĕ»*
3) *«Сурăм хĕрĕ»*
4) *«Хĕрлĕ мăкăнь»*

20. Н. Теветкел кăмăллакан жанр?
1) *элеги*
2) *ода*
3) *сонет*
4) *поэма*

21. «Хайла тытăмĕ» термина тĕрĕс уçса паракан хурава палăртăр:
1) *пролог, ĕç умĕ, ĕç пуçламăшĕ, ĕç тĕвĕленĕвĕ, ĕç аталанăвĕ, хĕрсе çитнĕ тапхăр, ĕç вĕçленĕвĕ, эпилог*



2) *фабула, композици*
3) *хайлав содержанийĕ*
4) *темипе тĕп шухăшĕ*

22. «Тĕп шухăш» вăл –
1) *хайлавра сăнласа кăтартнă пулăмăн пысăк шухăшĕ, пĕлтерĕшĕ*
2) *хайлавра мĕн çинчен каласа кăтартни*
3) *илемлĕ хайлавăн пĕтĕмĕшле тытăмĕ*
4) *литература хайлавĕнче пĕрин хыççăн тепри пулса иртекен ĕç-пулăмсен пĕтĕмĕшле йĕрки*

23. «Сюжет» вăл –
1) *тĕп, иккĕмĕшле е пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăнарăн вăрăм калаçăвĕ*
2) *тĕп текстри ĕç-пулăма йĕркелесе пыракан, хайлаври сăнар-характера пур енлĕн уçма пулăшакан литература ăнлавĕ*
3) *сăнар курăмларах, уçăмлăрах пултăр тесе икĕ е виçĕ сăнар çинчен черетпе çырса кăтартни*
4) *илемлĕ хайлавра сăнарсен, ушкăнсен, характерсен хушшинчи хирĕçӳ, кĕрешӳ*

24. «Литература геройĕ» вăл –
1) *илемлĕ хайлаври персонаж, ĕç тăвакан тĕп çын*
2) *çын сăнне, яланах, çут çанталăкри пулăмсене сăмахпа сăнласа кăтартни*
3) *илемлĕ хайлавра геройăн тулаш енне сăнласа пани*
4) *литературăри хайлавсенчи геройăн пĕтĕмĕшле ячĕ*

25. Лирикăлла герой тĕл пулакан жанр?
1) *новелла*
2) *баллада*
3) *калав*
4) *очерк*

**Б. Халăх сăмахлăхĕпе кивĕ тата çĕнĕ çырулăх вăхăтĕнчи чăваш литературинчен**

1. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсен ушкăнĕ?
1) *ĕç пирки каланисем*
2) *тĕрĕслĕхпе чăнлăх пирки калакансем*
3) *пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма каланисем*
4) *пурте кĕреççĕ*

2. Тупмалли юмах çинчен халăхра çапла каланă:
1) *«Юмах ярăп юптарăп, йăнăш çулпа чуптарăп»*
2) *«Автанпа ака турăм, йăран хĕррине ларса кантăм»*
3) *«Юратса кĕтме пĕлекенсем телейлĕ»*
4) *«Пĕлсен те – калăп, пĕлмесен те - калăп»*

3. К. Ивановăн «Икĕ хĕр» юмахĕн тĕсне палăртăр
1) *тупмалли юмах*
2) *халăх юмахĕ*
3) *литература юмахĕ*
4) *сутмалли юмах*

4. Н. Шупуççынни çырнă юмах.
1) *«Хитре Чĕкеç»*
2) *«Ăслă суеçĕ»*
3) *«Вĕри çелен»*
4) *Пурте*

5. «Вĕç-вĕç куккук» мĕнле юрăсем шутне кĕрет?
1) *халăх юрри*
2) *литература юрри*
3) *илемлетнĕ халăх юрри*

4) *сурхури юрри*
6. «Алран кайми аки-сухи» мĕнле юрăсем шутне кĕрет?
1) *ĕçкĕ юрри*
2) *кĕреке юрри*
3) *такмак*
4) *уяв юрри*
7. «Уй варринче» мĕнле юрăсем шутне кĕрет?
1) *истори юрри*
2) *улах юрри*
3) *салтак юрри*
4) *ĕçкĕ-çикĕ юрри*
8. Юрă сăмахесене малалла тăсăр: «Уй варринче лаштра юман,
Атте тесе ай кайрăм та,…»
1) *«Килех, тусăм», - ай темерĕ:*
*Чун хурланчĕ - макăртăм та…*
2) *«Килех, чунăм», - ай темерĕ:*
*Чун хурланчĕ - макăртăм та…*
3) *«Килех, ывлăм», - ай темерĕ:*
*Чун хурланчĕ – макăртăм та…*
4) *«Килех, юлташ», ай – темерĕ:*
*Чун хурланчĕ – макăртăм та…*
9. «Вĕлле хурчĕ» юрă авторĕ?
1) *халăх*
2) *Ф. Павлов*
3) *И. Тукташ*
4) *А. Асламас*
10. «Вăш-вăш, вăш-вăш ай çил вĕрет,
Каш-каш, каш-каш вăрман кашлать» сăмахсем хăш юрăран?
1) *«Вĕлле хурчĕ»*
2) *«Алран кайми аки-сухи»*
3) *«Линкка-линкка»*
4) *«Хĕл илемĕ»*
11. Кивĕ çырулăх вăхăтĕнчи чăваш литературинче палăрнă çыравçă
1) *Н. Бичурин*
2) *И. Яковлев*
3) *Çеçпĕл Мишши*
4) *К. Иванов*
12. Н. Бичурин хайлавĕсен жанр уйрăмлăхĕ?
1) *ода*
2) *сăвă*
3) *очерк*
4) *пурте*
13. «Байкал» очерк тĕсĕ
1) *илемлĕ*
2) *çул çӳрев*
3) *аса илӳ*
4) *сăн-сăпат*
14. Никита Бичурин ăçта çуралнă?
1) *Элĕк районĕнчи Тури Выльра*
2) *Шăмăршă районĕнчи Виçпӳрт Шăмăршăра*
3) *Шупашкар районĕнчи Шемшерте*



4) *Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхалĕнче*
15. Н. Бичурин кам пулнă?
1) *историк*
2) *монах*
3) *çыравçă*
4) *пурте тĕрĕс*
16. «Байкал» очеркра асăннă географи объекчĕсем
1) *Иркутск хули*
2) *Селенга шывĕ*
3) *Байкал кӳлли*
4) *пурне те*
17. Çĕнĕ çырулăх вăхăтĕнчи чăваш литературинче палăрнă çыравçă?
1) *И. Юркин*
2) *М. Федоров*
3) *Г. Кореньков*
4) *Пурте*
18. Çĕнĕ çырулăх вăхăтĕнчи чăваш литературинче палăрнă драматург?
1) *Г. Тимофеев*
2) *Х. Турхан*
3) *Г. Комиссаров*
4) *Г. Кореньков*
19. М. Федоровăн «Арçури» хайлавĕн хавхи (пафосĕ)?
1) *синкерлĕ*
2) *çĕкленӳллĕ*
3) *паттăрлăх*
4) *мăнаçлăх*
20. «Арçури» хайлаври «хуньăм хĕрĕ хура хĕр» кам вăл?
1) *арçури*
2) *Карчăк Микули*
3) *Хĕветĕр савни*
4) *Хĕветĕр арăмĕ*
21. М. Федоровăн «Арçури» хайлавĕнчи арçури йышăнакан сăнар.
1) *таркăн салтак*
2) *çурхи сурăх*
3) *анчăк*
4) *пурне те*
22. К. Ивановăн «Нарспи» поэмин сыпăкĕсен шучĕ
1) *11*
5) *16*
6) *12*
4) *14*
23. К. Ивановăн «Нарспи» поэмин çырав меслечĕ
1) *критикăлла реализм*
2) *постмодернизм*
3) *реализм*
4) *классицизм*
24. К. Ивановăн «Нарспи» поэминче юратакансене çут çанталăк мĕнле пулăшать?
1) *«пуçне тайса çул парать»*
2) *«урнă йытă пулса шелсĕр тулать»*
3) *«хĕвелĕ те вăтанса вăрман хыçне пытанать»*
4) *«анчах вăрман ăшĕнче хура кайăк чăйлатать»*

25. «Нарспи сăвви» виçе вăл –
1) *тăватă йĕркеллĕ катрен*
2) *вун тăватă йĕркеллĕ сăвă*
3) *пилĕкшер катренлă сăвă йĕрки*
4) *вунă диптихран тăракан сăвă йĕрки*

**В. XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи литературăран**

1. И. Яковлевăн «Чăваш халăхне» халала çырнă çул
1) *1921*
2) *1901*
3) *1918*
4) *1922*

2. И.Я. Яковлев Чĕмпĕрте вĕренекенсем умĕнче кам хайлавне малтанхи хут вуласа парать?
1) *Федор Павловăнне*
2) *Георгий Тал-Мăрсанне*
3) *Константин Ивановăнне*
4) *Марфа Трубинанне*

3. Мĕн вăл халал?
1) *уйрăлса каякан çын юлакансене асра тытма, пурнăçлама хушса, вĕрентсе каланă сăмах е парса хăварнă пурлăх*
2) *тав туса, ырă сунса калани*
3) *хисеплесе, ырă сунса ятарлă пĕлтернĕ сăмах*
4) *ватти çамрăка вĕрентсе каланă сăмах*

4. Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă «Вĕри çĕлен» поэма авторĕ
1) *К. Иванов*
2) *Г. Кореньков*
3) *Н. Шупуççынни*
4) *В. Игнатьев*

5. И.Я. Яковлев вĕренекенĕ, «Мул» повеçĕн авторĕ
1) *П. Васильев*
2) *И. Иванов*
3) *И. Юркин*
4) *М. Федоров*

6. Çеçпĕл Мишши çуралнă ял
1) *Слакпуç*
2) *Касаккасси Шĕкĕр*
3) *Шăхасан*
4) *Остер*

7. Çеçпĕл Мишшин юратăвĕ
1) *Анна Каренина*
2) *Наташа Ростова*
3) *Анастасия Червякова*
4) *Татьяна Ларина*

8. Çеçпĕл Мишшин «Ĕнер йывăç пахчи кăмăлне
Кун каçах туй турĕ çуркунне» сăмахĕсенче мĕнле илемлĕх мелĕ пур?
1) *Эпитет*
2) *Сăпатлантару*
3) *Синегдоха*
4) *Танлаштару*

9. Çеçпĕл Мишшин трагедийĕн сăлтавĕ
1) *аптратса çитернĕ чирĕ*
2) *савнă çыннипе юнашар пулайманни*
3) *пурнăç чăнлăхĕпе Çеçпĕл идеалĕ хирĕçĕве кĕни*
4) *пурте тĕрĕс*

10. Çеçпĕл Мишши çырман хайлав
1) *«Вăрман ачисем»*
2) *«Юншăх»*
3) *«Упик»*
4) *«Ултăк»*

11. Çеçпĕл Мишшин «Тăван çĕршыв, е сан та вăю пĕтрĕ?
Е чăваш чĕлхин хăват çĕтрĕ?» çавра хăш сăввинчен?
1). *«Чăваш, чăваш»*
2) *«Тинĕсе»*
3) *«Йывăр шухăшсем»*
4) *«Пуласси»*

12. Ф. Павлов пултарулăхĕн тапхăрĕсем (хăшĕ ытлашши)
1) *Патăрьел-Иккасси тапхăрĕ*
2) *Крым тапхăрĕ*
3) *Чĕмпĕр тапхăрĕ*
4) *Шупашкар тапхăрĕ*

13. Ф. Павлов çырнă хайлав
1) *«Йăсăркка»*
2) *«Эссепе»*
3) *«Раççей»*
4) *«Шурă кăвакарчăн»*

14. Ф. Павловăн «Ялта» пьесин жанр тĕсĕ
1) *трагеди*
2) *комеди*
3) *драма*
4) *фарс*

15. Ф. Павловăн «Ялта» драминче çак сăмахсене кам кама калать? «Эсĕ хăрушă этем. Сан сăмахусене илтсен сивĕсĕр шăнса каймалла. Эпир çакă начар пӳртре те телейлĕ пурăнатпăр. Упăшка мана юратать».
1) *Пăрчăкан Çтаппана*
2) *Елюк Ванюка*
3) *Елюк Çтаппана*
4) *Йăскар Муççана*

16. Ф. Павловăн «Ялта» драминче Елюк мĕншĕн шыва сиксе вилме тăрать?
1) *Ачи вилнĕрен*
2) *Тарçара ĕçлесе ывăннăран*
3) *Ванюк вилни пирки суя çыру илнĕрен*
4) *Пурăнма йăлăхтарнăран*

17. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи литературăри психологилле проза ăсти
1) *Ю. Скворцов*
2) *А. Артемьев*
3) *С. Ялавин*
4) *Н. Петровская*

18. С. Ялавинăн «Çул çинче» хайлавăн жанр тĕсĕ
1) *повесть*
2) *новелла*
3) *калав*
4) *очерк*

19. С. Ялавинӑн «Çул çинче» калавӑн теми?

1) *Юратупа туслӑх*

2) *Пурнӑçпа вилӗм*

3) *Çемье*

4) *Ачасене пӑхса çитӗнтерес*

20. С. Ялавинӑн «Çул çинче» калавӑн темине палӑртакан предложени

*1) «Ваттисем вилсе пыраççӗ, вӗсем вырӑнне ачасем çуралаççе, ӳссе çитӗнсен – каччӑсем авланаççӗ, хӗрсем качча каяççӗ. Çапла вӑл пурнӑç»*

*2) «Улькkaç каймастӑп тесе татса калаймарӗ. Миккулка çине куç хӳрипе вӑтанкаласа пӑхса илчӗ те пичӗ пӗçерсе кайнипе пуçне усрӗ»*

*3) «Çав вӑхӑтра амӑшӗ ӑна ан кай, кӑçаллӑха тӑр тесен, вӑл ӑна хирӗç кӑшкӑрса пӑрахма хатӗр»*

*4) «Аккӑшӗпе питӗ килӗштерсе пурӑнаççӗ вӗсем. Халь вӑл N ялӗнче пурӑнать»*

21. С. Ялавинӑн «Çул çинче» калавӑн пуплев сийӗсене палӑртӑр

1) *Автор-калуçӑн*
2) *Улькkaçӑн*
3) *Урттемейӗн*
4) *Пурте тӗрӗс*

22. С. Ялавинӑн «Çул çинче» калаври çӑк сӑмахсенче мӗнле троп пытаннӑ? «Йывӑççем хӑрушшӑн, чуна сӗвӗртсе пӗр-пӗринпе темӗскер çинчен васкаса калаçса илчӗç те хашлатса хуйхӑрса ячӗç»

1) *Гипербола (пысӑклату)*
2) *Градации (вӑйлату)*
3) *Олицетворени (чӗрӗлӗх)*
4) *Метафора*

23. С. Ялавинӑн «Çул çинче» калавра çӑк сӑмахсене кам калать? «Манӑн паян юрлас килет, йӗрес килет, такама тытса хӗнес килет!»

1) *Миккулкка*
2) *Ерхип*
3) *Урттемей*
4) *Калуçӑ*

24. С. Ялавинӑн «Çул çинче» калавра Улькkaç аккӑшне туя чӗнме мӗнле çулпа каять?

1) *Хир урлӑ*
2) *Тавра çул*
3) *Вӑрман витӗр*
4) *Пурте тӗрӗс*

25. XX ӗмӗрӗн пӗрремӗш тата иккӗмӗш çурринчи литературӑра палӑрнӑ сӑвӑç

1) *Çеçпӗл Мишши*
2) *Николай Шупуççынни*
3) *Митта Ваçлейӗ*
4) *Валерий Туркай*

**Г. XX ӗмӗрӗн иккӗмӗш çурринчи литературӑран**

1. Митта Ваçлейӗ калӑпланӑ сӑвӑ ярӑмӗ

1) *«Тилли юррисем»*
2) *«Çурçӗр сӑввисем»*
3) *«Тайӑр»*
4) *«Çӗр чунӗ»*

2. «Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам,
Пин юррӑран пӗри анчах юлайтӑр.
Ӑна тӑван ыр кӑмӑлпа юрлатӑр, -
Вара ман канлӗ пулӗччӗ тӑпрам» çаврана Митта Ваçлейӗн хӑш сӑввинчен илнӗ?



1) *«Анатри юрӑ»*
2) *«Тайӑр»*
3) *«Пит маттур-çке Иванов бульварӗ»*
4) *«Чул çыран хӗрринче»*

3. Митта Ваçлейӗ «Тайӑр» ярӑма хӑш вӑхӑтри сӑввисене кӗртнӗ?

1) *Чи малтанхи сӑввисене*
2) *Мӑшӑрӗпе ачисене халалланисене*
3) *Таван çӗр-шыва халалланисене*
4) *Пуç илере (ссылкӑра) çырнисене*

4. Митта Ваçлейӗн хайлавӗсем.

1) *«Тайӑр» ярӑм, «Анатри юрӑ», «Чул çыран хӗрринче»*
2) *«Кӗрхи илем», «Тайӑр» ярӑм, «Юратрӑм эп, хирсем, сире»*
3) *«Виçӗ хӑват», «Анатри юрӑ», «Сехет шаккать, шаккать… »*
4) *«Юратрӑм эп, хирсем, сире», «Чул çыран хӗрринче», «Укӑлча умӗнче»*

5. Ю. Скворцовӑн «Хӗрлӗ мӑкӑнь» хайлавӗн жанр тӗсӗ

1) *социалла йӑла повеçӗ*
2) *лирикӑлла повесть*
3) *психологилле повесть*
4) *лирикӑлла-философилле калав*

6. Ю. Скворцовӑн «Уках хурӑнӗ» повеçӗнчи сӑнар

1) *Хӗветли*
2) *Сухви*
3) *Сайте*
4) *Хреççи*

7. Ю. Скворцовӑн «Уках хурӑнӗ» повеçӗнче сӑнланнӑ тапхӑр

1) *Иккӗмӗш тӗнче вӑрçи вӑхӑтӗнчи тата ун хыççӑнхи пурнӑç*
2) *Иккӗмӗш тӗнче вӑрçи вӑхӑтӗнчи пурнӑç*
3) *XX ӗмӗр пуçламӑшӗнчи тапхӑр*
4) *XX ӗмӗр вӗçӗнчи тапхӑр*

8. Ю. Скворцовӑн «Уках хурӑнӗ» повеçӗнчи символсем

1) *Кайӑксен юрри, вӑрман, хурӑн, легенда*
2) *Вӑрман, хурӑн, легенда, лӗпӗш*
3) *Сарӑ кайӑк, лӗпӗш, вӑрман*
4) *Вӑрман кушакӗ, хурӑн, çумӑр*

9. Ю. Скворцов «Уках хурӑнӗ» повеçӗнче эпиграфсене ӑçтан илнӗ?

1. *Сӑвӑсенчен*
2. *Проза хайлавӗсенчен*
3. *Легендӑсенчен*
4. *Халӑх юррисенчен*

10. Ю. Скворцовӑн «Ултӑк» калавӑн теми

1) *Юратупа туслӑх*
2) *Ачисем ватӑ ашшӗ-амӑшне манни*
3) *Тӑван çӗр-шыва юратни*
4) *Пурнӑçпа вилӗм*

11. Ю. Скворцовӑн «Пушмак йӗрӗ» калаври Паньӑн чӗлхесӗрлӗхӗ мӗне пӗлтерет?

1) *Çынсемпе калаçас килменнине*
2) *Шухӑшӗсене ыттисенчен пытарнине*
3) *Çут тӗнче хушшинче ӑнланулӑхпа килӗшӳлӗх çуккине*

*4)Тӗнчере ытлашши çын пулнине*

12. А. Артемьевӑн «Саламӑн» повеçӗн жанр тӗсӗ

1) *романтикӑлла повесть*

2) *лирикăлла повесть*
3) *психологилле повесть*
4) *философилле повесть*

13. А. Артемьевăн «Симĕс ылтăн» повеçĕн тĕсĕ
1) *сентименталлă*
2) *социалла-психологилле*
3) *лирикăлла психологилле*
4) *трагедилле*

14. А. Артемьевăн «Салампи» повеçĕнчи Алмазовпа Салампи туйăмĕсене палăртмалли мел
1) *Диалог (калаçу)*
2) *Портрет (сăнласа пани)*
3) *Çут çанталăк пулăмĕсем*
4) *Ăшри монолог*

15. А. Артемьевăн «Симĕс ылтăн» повеçри тĕп хирĕçӳ (конфликт)
1) *Актаевпа Аюхин хушшинче*
2) *Аюхинпа Нина хушшинче*
3) *Савировпа Кузнецов хушшинче*
4) *Нинăпа Актаев хушшинче*

16. А. Артемьевăн «Симĕс ылтăн» повеçре «Хăмла аври тем чул явăнсан та шучă вĕçне çитсе тухатех, вара усăнать» сăмахсем кама пырса тивеççĕ?
1) *Валентин Актаева*
2) *Федор Ивановича*
3) *Варсун Аюхина*
4) *Нина Атласкинăна*

17. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» хайлавĕн жанр паллисем
1) *социалла йăла романĕ*
2) *социалла-психологилле роман*
3) *историлле роман*
4) *роман-эпопея*

18. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» роман пуçламăшĕн эпиграфĕ
1) *«Ĕмĕр сакки сарлака»*
2) *«Хура çăкăр çиекен хур пулман, тет»*
3) *«Сунтал пулсан – чăтнă пул, мăлатук пулсан – хытăрах çап»*
4) *«Çапла иртрĕ пурăнăç»*

19. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романче Селимен Кантюк килĕнче пурăннин сăлтавĕ
1) *Кантюк ывăлне качча кайма хатĕрленет*
2) *Тухтартан пытанса пурăнать*
3) *Ашшĕ «сутса» янăран*
4) *Ашшĕ-амăшĕпе килĕшсе таталнă*

20. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романри нумай стильлĕх
1) *Лирикăлла, камитлĕ, публицистикăлла, психологилле, трагизмла*
2) *Лирикăлла, публицистикăлла, философилле, иронилле*
3) *Трагизмла, философилле, психологилле*
4) *Публицистикăлла, кулăшла, трагизмла*

21. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романри Шерккей çемьи хăçан арканма пуçлать?
1) *Шерккей ашшĕн мулне тупнă хыççан*
2) *Сайте вилнĕ хыççан*
3) *Кантюк патне кайса курнă хыççăн*
4) *Селимене вăрлаттарса янă хыççан*



22. А. Емельяновăн "Хура кăрăç" повеçĕнчи Крыслов вăрманĕн ячĕ
1) *Крыслов вăрманĕ*
2) *Крыслов кати*
3) *Крыслов Швейцарийĕ*
4) *Крыслов уçланки*

23. А. Емельяновăн "Хура кăрăç" хайлавĕнчи "Ачана тĕрĕс чĕреллĕ ӳстермерĕн эс"сăмахсене калакан герой.
1) *Федор Кузьмич*
2) *Семен Крыслов*
3) *Лариван Васильч*
4) *Урине*

24. 1980-1990-мĕш çулсенчи вăхăтпа çын пĕрлĕхне шухăшлавлă ăнлантаракан поэтсем:
1) *А. Юман, Г. Айхи, Н. Исмуков*
2) *С. Сатур, М. Сениэль, И. Вутлан*
3) *Ю. Силэм, Л. Сарине, П. Эйзин*
4) *М. Сироткин, М. Кипек, В. Алентей*

25. Н. Терентьевăн «Пушар лаши» пьесинчи Якку кампа пĕрлешет?
1) *Ливатипе*
2) *Сухвипе*
3) *Клавьепе*
4) *Марьепе*

**Д. Паянхи литературăран**

1. Н . Петровскаян "Шурă лили" повеçĕнчи Гальăн профессийĕ:
1) *врач*
2) *доярка*
3) *агроном*
4) *учитель*

2. Н. Петровскаян "Шурă лили" повеçĕнчи Надьăпа Галя…
*1) апп ăшĕпе йăмăкĕ*
*2) туссе м*
*3) ĕç тешсем*
*4) институтра пĕрле вĕренекенсем*

3. Хайлавпа автор ячĕсене тĕрĕс тупса палăртăр.

| | |
|---|---|
| 1) *Н. Петровская* | 1. *"Çил-тăманлă каç"* |
| 2) *Д. Гордеев* | 2. *"Çурта кунĕ"* |
| 3) *А. Емельянов* | 3. *"Юхать юхан шыв"* |
| 4) *Л. Таллеров* | 4. *"Хура кăрăç "* |

4. Ю. Сементерĕн чăвашлăх темипе çырнă сăввисем:
1) *«Амăшĕн чунĕ», «Эпир чăвашсем, чăвашсем пуласшăн», «Çӳл тӳпене пăхса каланă сăмахсем»*
2) *«Куççуль», «Çăка çулçи çырăвĕсем»*
3) *«Уçланкăри палан», «Амăш чунĕ»*
4) *«Шурăм пуç», «Телей кайăкĕ»*

5. П. Афанасьев _______Республикинче çуралса ӳснĕ
1) *Чăваш*
2) *Тутар*
3) *Пушкăрт*
4) *Мари*

6. П. Афанасьевăн психологилле калавĕсемпе повеçĕсем:
1) *«Вучах», «Пурăн, юрату», «Арçури»*

2) *«Эс ҫирĕм иккĕреччĕ», «Алран кайми»*
3) *«Юратăр тĕнчене», «Ҫулсем, сăнсем, туссем»*

7. 1980-1990-мĕш ҫулсенчи вăхăтпа ҫын пĕрлĕхне шухăшлавлă ăнлантаракан поэтсем:

1) *А. Юман, Г. Айхи, Н. Исмуков*
2) *С. Сатур, М. Сениэль, И. Вутлан*
3) *Ю. Силэм, Л. Сарине, П. Эйзин*
4) *М. Сироткин, М. Кипек, В. Алентей*

8. Ача-пăчапа яш-кĕрĕм поэзине аталантаракансем:

1) *Н. Ишентей, Д. Гордеев, В. Петров*
2) *П. Ялкир, А. Ыхра, Н. Ытарай*
3) *Ю. Айташ, С. Павлов, П. Хусанкай*
4) *С. Сатур, Л. Сачкова, Н. Ишентей*

9. «Уҫланкăри палан» юрă сăмахĕсен авторĕ:

1) *Светлана Асамат*
2) *Валем Ахун*
3) *Юрий Сементер*
4) *Раиса Сарпи*

10. Г. Айхин хайлавĕсене палăртăр:

1) *«Аттесен ячĕпе», «Чĕрĕ тĕвĕ»*
2) *«Чул пикеҫ», «Улăп» эпос сыпăкĕсем*
3) *«Хĕвел кĕлти», «Халал»*
4) «Ҫурхи йĕпхӳ», «Искай Пайтулĕ»

11. Ю. Айташăн сăвăлла романĕ:

1) *«Искай Пайтулĕ»*
2) *«Атнер»*
3) *«Пĕтĕм пурнăҫшăн ҫĕкленнĕ музыка»*
4) *«Ҫĕрлехи тĕлпулу»*

12. Хайсен пьесинче социаллă, мораль ыйтăвĕсене ҫивĕч хускатса психологиллĕ конфликтра тишкернĕ автăр:

1) *А. Чебанов*
2) *Н. Угарин*
3) *В. Туркай*
4) *пурте тĕрĕс*

13. Н. Сидорова мĕнле спектакльшĕн Чăваш Республикин Патшалăх премине парса чыс тунине палăртăр:

1) *«Хӳхĕм хĕрĕн хӳхлевĕ»*
2) *«Шупашкарти савни»*
3) *«Ют йăвари куккук»*
4) *пĕри те тĕрĕс мар*

14. «Ҫатан карта ҫинчи хура хăмла ҫырли» драма авторĕ:

1) *А. Чебанов*
2) *Н. Сидоров*
3) *Б. Чиндыков*
4) *Н. Угарин*

15. Пьеса авторĕсене тĕрĕс палăртăр:

| | |
|---|---|
| 1) *«Ҫатан карта ҫинчи хура хăмла ҫырли»* | *1) Н. Угарин* |
| 2) *«Ăҫта эс, ҫăлăнăҫ?»* | *2) Б. Чиндыков* |
| 3) *«Таркăн»* | *3) Н. Сидоров* |
| 4) *«Мăнкун умĕн»* | *4) В. Туркай* |